# НИКОЛА ВАПЦАРОВ

*Болгари Халăх Республики*

## ЁНЕНЎ

Ак эп пурăнатăп, ўсетĕп, ĕçлетĕп,
Пултарнă таран сăвăсем кĕвĕлетĕп.
Тўрех пурнăçа куçĕнчен эп пăхатăп,
Ăна хам ура йĕррине пусма памăп!

Эп вăрçăллă çак пурнăçпа. Анчах эпĕ
Писмен-ха унран, тăрантман вăл мана:
Çук! Сывлăш тухми пуличчен, кун хисепĕ
Йăлтах пĕтиччен эп юратăп ăна!

Ак, калăпăр, майкăч мăя йăлмаклатăр,
„Тата пĕр сехет пурăнатни?" тесе
Ыйтсассăн манран, эпĕ кăшкăрăп: „Салтăр!
Вĕçерĕр часрах кантрăра, ирсĕрсем!"

Эп темĕн те тăваттăм пурнăç пурнасшăн
Çĕкленĕттĕм çĕн машшинпа пĕлĕте,
Ракета ăшне кĕрĕттĕм эп хавассăн,
Çĕн çăлтăр тупма вĕçĕттĕм инçете.

Телейлĕ эп пулăттăм çут тĕнчере
Эп курăттăм аслă кăвак тӳпене,
Тем пысăкăш савăнăçпа ман чĕре
„Пурăнап-ха!" тесе, тапĕччĕ ун чухне.

Анчах та эсир ман ĕненĕвĕме
Пĕр тулă пĕрчи пек кăна чакарсассăн,
Вара уласа йĕрсе ярăттăм эп
Аманнă пантера майлах чунхаяррăн.

Мĕн курăп-ха эп ĕненӳсĕр, кам пулăп?
Эп унсăр – çаратăннă ыйткалакан,
Уксах-чăлаха, мĕскĕне тăрса юлăп,
Эп унсăр—çĕр хурчĕ, сĕм суккăр ăман.

Ĕненĕвĕме вĕлерес тетĕр, тен?
Вăл ман кăкăра ăшăтать яланах,
Вăл—„пурнăç аван, ăслăрах пулĕ" тет,
Çавна вĕлересшĕн-и? Ку—кăлăхах.

Мĕнле хĕçпăшал сирĕн? Пуля? Граната?
Çук! Питĕ шалта вăл ĕненĕвĕм ман!
Тивеймĕ ăна тĕнчери пĕр снаряд та,
Туман-ха ăна витес пуля! Туман!